Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

105 (7847) № * Юн кун, 2010 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 15-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Пĕлӳ тĕнчине йыхравлать



*Тăрăшуллă та туслă, ĕçчен коллективе вăй хурать Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта. Аслисемпе пĕрлех çамрăк специалистсем те ачасене пĕлӳ тĕнчине кĕме хатĕрлес, унăн анлă çулĕпе çирĕппĕн утăмлама пулăшас тесе çине тăрса ĕçлеççĕ тата ку тĕлĕшпе ăнăçлăн ертсе пыраççĕ.*

*Акă сăн ӳкерчĕкре куракан Светлана Николаевна Димитриева кунта ĕçлеме тытăнни нумаях мар. Шкул çулне çитмен ачасен кĕске вăхăтлăх ушкăнне ертсе пырать вăл. Тепĕр майлă каласан унăн воспитанникĕсем çулталăкран пĕрремĕш класа каймалла тытăнаççĕ. Малашне вĕсем пĕлӳ ăсталăхне туптассипе епле ӳсĕмсем тăвасси хăйĕнчен те чылай енчен килнине аван ăнланать çамрăк специалист.*

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Кĕскен

### Ĕç укçи ӳсет

Раштав уйăхĕ пуçланнă тĕле районти организацисенче (пĕчĕк предпринимательство шутне кĕменнисемсĕр) ĕçлекенсен вăтам ĕç укçи 9723 тенкĕ пулнă. Ку вăл çулталăк каяллахинчен 13,4 процент пысăкрах. Районти организацисенче пĕтĕмпе 5464 çын ĕçлет. Ку вăл пĕлтĕрхин 94,5 проценчĕ е 318 çын сахалрах.

### Выльăх апачĕ кӳреççĕ

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ çапла пĕлтерет. Муркаш енри агропромышленноç комплексĕнчи ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе граждансен килти хушма хуçалăхĕсем выльăх-чĕрлĕхе тулăх хĕл каçарма апат ытти регионсенчен турттараççĕ. Иртнĕ çу кунĕсенчених выльăх апачĕ пирĕн района Чул хула, Киров, Владимир облаçĕсемпе Мордва тата Çармăс Республикисенчен, Алтай крайĕнчен килсе тăрать.

Ял хуçалăх предприятийĕсенчен ку енĕпе Ильич яч. хис., «Ударник», Суворов яч. хис., «Свобода», «Восток», «Оринино», Чапаев яч. хис. хуçалăхĕсемпе «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» усă акционерлă общество, «Фаворит» чикĕллĕ яваплăхлă общество лайăх ĕçлесе пыраççĕ.

Раштав уйăхĕн 10-мĕшĕ тĕлне района пурĕ 1138 тонна утă, 1937 тонна улăм, 378 тонна сенаж, 2508 тонна фуражлăх тырă, 331 тонна хывăх (отрубь), 4055 тонна комбикорм турттарса килнĕ.

### Сĕт сăвăмĕ пирки

Хĕл кунĕсем пыраççĕ. Çуллахи ĕçсене пĕтĕмлетекен тапхăр темелле вĕсене. Тĕслĕхрен сĕт сăвасси. Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ пĕлтернĕ тăрăх раштав уйăхĕн 10-мĕшĕ тĕлне районти ял хуçалăх предприятийĕсенче пĕр ĕне пуçне вăтамран 9,2 килограмм (пĕлтĕр – 9,7 кг) сĕт сунă. Хуçалăхсенчи сумалли ĕнесен пĕтĕмĕшле кĕтĕвĕ 2147 пуçпа танлашать. Вĕсем çав кун тĕлне пĕтĕмпе 19764 килограмм сĕт антарнă.

Суворов яч. хис. хуçалăхра ĕне пуçне пуринчен те ытларах сĕт сăваççĕ: 13,2 килограмм.

Сĕт таварлăхĕ вăтамран 87-88 процентпа танлашать.

Сĕт хакĕсем: «Моргаушимолоко» 1 килограмшăн 16 тенкĕ, Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсем 15-шер тенкĕ тӳлеççĕ.

**А. БЕЛОВ.**

Йышăну

## Ялан хатĕр пулмалла

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов раштав уйăхĕн 9-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Чрезвычайлă лару-тăру министерствине туса хунăранпа 20 çул çитнĕ ятпа Çălавсăсен кунĕ ячĕпе (раштав уйăхĕ 27-мĕшĕ) пушарпа çăлав спорчĕн ăмăртăвĕсене ирттересси пирки 961 номерлĕ йышăну çине алă пуснă.

Йышăнупа килĕшӳллĕн ку ăмăртусем раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнче Муркашра «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ хыçĕнчи пĕве çинче иртмелле. Ăмăртăва хутшăнакансем – ял тăрăхĕсенчи ирĕклĕ пушар хурал дружинисен командисем. Ăмăрту йĕркипе килĕшӳллĕн вĕсенче 5-шер çын пулмалла: ял тăрăхĕн пуçлăхĕ тата вырăнти ирĕклĕ пушар хурал дружинин 4 членĕ. Ăмăртăва хутшăнакансен вăхăтпа пушарнăй çи-пуçне тăхăнмалла, пĕрле пулса пĕвери шывран мотопомпăпа шыв илсе условнăй мишене ӳкермелле, канат туртса вăйлăраххине палăртмалла.

Ăмăртăва ирттерме йĕркелӳ комитетне çирĕплетнĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов ертсе пырать.

## Таварсен – çирĕплетнĕ хак

Хаксем

Социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕçе туяннă чух бюджетри укçа-тенкĕпе епле усă курнине палăртассипе Чăваш Енри министерствăсемпе ведомствăсем вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле тĕтăшах эффективлăх мониторингне ирттереççĕ.

Пирĕн районта та РФ Правительствин 2010 çулхи июлĕн 15-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ чи кирлĕ социаллă пĕлтерĕшлĕ уйрăм апат-çимĕç (25 тĕслĕ тавар) хакĕсем тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2007 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе палăртнă 9 тĕслĕ апат-çимĕç таварĕ тĕлĕшпе кашни эрнерех мониторинг иртет. Кун пирки район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э. Симакова пĕлтерчĕ. Çак ĕçе районта ятарлă ушкăн пурнăçлать.

Çапла сентябрь – ноябрь уйăхĕсенче районти 59 суту-илӳ предприятийĕнче тĕрĕслевсем иртнĕ. Тĕрĕслев 13 суту-илӳ точкинче социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсен хакĕсем палăртнинчен пысăкрах пулнине кăтартнă. Ĕçлĕ ушкăн суту-илӳ точкисен представителĕсене социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсен хакĕсене шайлаштарма сĕнӳ панă. Районти ĕç ушкăнĕн тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсене шута илсе декабрĕн 23-мĕшĕнче черетлĕ лару ирттерме планланă.

Районти шкулсемпе сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсем туянакан апат-çимĕç хакĕсен тĕлĕшпе те мониторинг пур. Бюджет учрежденийĕсем апат-çимĕçе мĕнле хаксемпе туяннине, патшалăх шайĕнче сĕннĕ хаксене тытса пынине яваплă ушкăн тĕрĕслесех тăрать. Вĕрентӳ тата сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсем тавар кӳрекенсенчен апат-çимĕçе çирĕплетнĕ хаксемпе çеç туянаççĕ. Малтанхи тĕрĕслевсем асăннă муниципаллă учрежденисенче бюджет укçипе тĕрĕс мар усă курнă фактсем тăрăх укçа-тенкĕ калăпăшне пĕтĕмпех саплаштарнă ĕнтĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## ЧР Президенчĕ Патшалăх Канашне Çырупа тухрĕ

**Чăваш Республикин Президенчĕ Михаил Игнатьев ĕнер Патшалăх Канашне тата Чăваш Ен халăхĕ патне Çырупа тухрĕ.**

Республика Президенчĕн тĕп тытăм пулса тăракан политика документĕнче ӳсĕмсене, республика умĕнче тăракан пысăк пĕлтерĕшлĕ проблемăсене хак панă, Правительствăн, Патшалăх Канашĕн, вырăнти влаç органĕсен, предприятисемпе организацисен кĕске тапхăрти тата нумай вăхăтлăх ĕç программисен тĕп енĕсене палăртнă.

Михаил Игнатьев Президент Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем тата республика халăхĕ патне Çырупа пĕрремĕш хут тухрĕ.

ЧР Конституцийĕпе килĕшӳллĕн республика Президенчĕ çуллен Патшалăх Канашне Çырупа тухать. Унта вăл Чăваш Республикин патшалăх политикин тĕп çул-йĕрĕсене палăртать тата республикăн экономикăпа социаллă пурнăç программисене мĕнле пурнăçласа пынине хак парать.

Информаци кунĕ

## Президентсен Çырăвĕсемпе паллаштарĕç

Паян районта черетлĕ информаци кунĕ иртет. Унăн теми – РФ Президенчĕ Д.А. Медведев Раççей Федерацийĕн Федераллă Пухăвне тата Чăваш Республикин Президенчĕ М.В. Игнатьев ЧР Патшалăх Канашне янă Çырусенчи тĕп положенисене пурнăçа кĕртесси, «Об образовании в Российской Федерации» Федераллă саккун проектне тишкересси.

Районти ĕç коллективĕсенче пулма, çынсемпе тĕл пулусем ирттерме района республикăран унчченхи ушкăнах килет. Вĕсем паян Муркаш, Мăн Сĕнтĕр, Ярославка, Çатракасси ял тăрăхĕсене çитме палăртаççĕ.

Вун пĕр уйăх кăтартăвĕсем

## Промышленность

Пĕтĕмĕшле промышленность предприятийĕсем иртнĕ çулхинчен чылай ӳсĕмлĕрех ĕçлеççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа промышленность продукцине 1020012,4 пин тенкĕлĕх туса кăларнă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан ку вăл 167 процент пулать.

Чи ăнăçлă ĕçлекеннисем шутĕнче «Сеспель» предприяти (541236 пин тенкĕлĕх е 288,4 процент), «Моргаушская» строительство организацийĕ (53739 пин тенкĕлĕх е 247 процент), Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсем (18212,1 тата 16057,8 пин тенкĕлĕх е 112,9 тата 111,6 процент). Муркашри кирпĕч завочĕ (98,4 процент), «Моргаушавтотехсервис» (97,5 процент), «Моргаушкорм» (72,3 процент), «Вита» (39,5 процент), Муркаш почтамчĕ (91,3 процент) продукци туса кăларассипе иртнĕ çулхи шая çитеймен.

Прокуратурăра

## Граждансене йышăнаççĕ

РФ Генеральнăй прокуратурин тата ЧР прокуратурин кăтартăвĕсене пурнăçланă май преступленисем пирки пĕлтернисене йышăннă, регистрацийĕне тата ыйтăва татса панă чухне саккуна мĕнле пăхăннине тĕрĕслесе тăрас, çавăн пекех регистрациленмен преступленисене тупса палăртас тĕллевпе асăннă ыйтусемпе граждансене 2010 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнче 10 сехетрен тытăнса 12 сехетчен район прокурорĕпе унăн çумĕ йышăнаççĕ.

Саламлатпăр



Чи юратнă çыннăмăра, аннене, кукамая Йӳтĕркасси ялĕнче пурăнакан **Татьяна Михайловна МАТВЕЕВĂНА** çывхарса килекен юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн питĕ пысăк телей. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр, хамăра телейлĕ туятпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тавартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем.**

Çырăнтару

**Хаклă вулаканăм!**

**Райхаçата çĕнĕ çултан илсе тăма çырăнтарас тапхăр малалла пырать. Çырăнтару хакĕ унчченхиех – 191 тенкĕ те 70 пус (ултă уйăха).**

# Пĕрремĕш тивĕç – шанăçа тÿрре кăларасси

**Сăмах – ял тăрăхĕн пуçлăхне**



***Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен иртнĕ суйлавĕнче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пулма унччен кунта ĕçлемен çĕнĕрен суйланă 6 çынран пĕри – Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Алексей Николаевич Матросов. Унпа тĕл пулнă май эпĕ чи малтанах ял çыннисен пурнăçĕ, татса памалли ыйтусем пирки сăмах хускатрăм.***

**– Алексей Николаевич, малтанах хаçат вулакансене хăвăр пирки кăштах каласа парсамăр?**

– Çураласса эпĕ районти Çĕньял Оринин ялĕнче çуралнă. Анчах та мĕн ачаранпах Москакассинче пурăннă, кунтах шкул çулĕсем те иртнĕ. 2005 çулта Шупашкарти строительство тата хула хуçалăх техникумне вĕренсе пĕтертĕм. Унтанпа тĕрлĕ ĕçре вăй хунă, юлашки вăхăтра предпринимательре ĕçне те кÿлĕнме тивнĕ. Çемьеллĕ, мăшăрпа пĕр ача пăхса ÿстеретпĕр.

**– Çакна ыйтса пĕлес кăмăл пур. Сирĕн ял тăрăхĕпе пуçлăха суйланма кандидатура тăратнисем 5 çын пулнăччĕ. Конкуренци тени пулман мар. Унччен ял тăрăхне ертсе пынă М.М. Пушкин суйлавра 244 сасă пухнă пулсан, сирĕншĕн 328 çын е суйлавçăсен 33,27 проценчĕ сасă панă. Апла пулсан суйлавçăсем сирĕн çине пысăк шанăç хураççĕ?**

– Малтанах май килнипе усă курса ял çыннисене, суйлавçăсене мана çакăн пек чыс тунăшăн, ял тăрăхне ертсе пыма шаннăшăн пысăк тав сăмахĕ калама пулăттăм. Ăнланатăп: пысăк чыс – пысăк ответлăх. Кунта хăвăн пирки кăна шутламалла мар. Шанăçа тÿрре кăларас тесе çине тăрас пулать. Ыйтусем вара паян ял çынни умĕнче пĕчĕк мар тата сахал мар. Çапах та пĕрле ĕçлесе пырсан вĕсенчен ытларахăшне чиперех татса пама май çитерĕпĕр тесе шутлатăп.

**– Сирĕн ял тăрăхĕн территорийĕнче 16 ял шутланать. Сахалах мар. Апла пулсан умри ĕçсем те ытлă-çитлех пулĕ. Мĕншĕн тесен ытларах чухне территори мĕн чухлĕ пысăкрах, ыйтăвĕсем те çавăн чухлĕ калăпăшлăрах вĕт-ха?**

– Ку чăнах çапла. Пĕтĕмĕшле илес пулсан пур ялсенче те тенĕ пекех газ пур, ытларах ялсен патне çулсем сарса çитернĕ. Хальхи вăхăтра çĕнĕ урамсене электрификацилессипе çине тăрса ĕçлетпĕр. Ку ĕçсем Ситуккасси, Эхветкасси, Калмăккасси ялĕсенче пыраççĕ. Уйкас Хачăк, Мăрсакасси ялĕсем тĕлĕшпе те çывăх вăхăтра ку ыйтăва татса памалла пулать.

Ял çыннине канăç паман яланхи ыйту вăл – шывпа тивĕçтересси. Чылай çĕрте нумай çул каялла хурса хăварнă шыв пăрăхĕсем юрăхсăра тухаççĕ. Вĕсене юсаса сахал мар тăкакланма тивет. Нумай çĕрте пăрăхсене пачах çĕнĕрен хурса хăварма тивет. Акă Калмăккасси, Рыккакасси ялĕсенче шывпа тивĕçтерессине йĕркелеме проектсем хатĕрлетпĕр ĕнтĕ. Шыв усламалли башньăсене техника инвентаризацийĕн бюровĕ урлă хамăр çине куçарасшăн. Кунпа пĕрлех ялсенче çăлсем чавассине те йĕркеленĕ. Çак ĕçрен ял çыннисем те айккинче тăрса юлмаççĕ. Мĕншĕн тесен çакă вăл пĕтĕмпех хăйсемшĕн пулнине чылайăшĕ тĕрĕс ăнланать. Ял тăрăхĕ вара çăл пурисем валли тимĕр-бетон ункăсемпе тивĕçтерме майсем шырать.

**– Юлашки вăхăтра ялсенче пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕ те çивĕч тăрать. Колхоз-совхозсем саланса пĕтнĕ май чылай çĕрте пушар хуралĕн машинисене те тытса тăракан та юлмарĕ. Е вĕсем пачах та çук, е вĕсене салатса пĕтернĕ. Сирĕн патра ку енĕпе лару-тăру мĕнлерех?**

– Ыйту чăнах та çăмăллисен шутĕнче мар. Апла пулин те ку ыйтăва пĕрле татса пама май пур тесе шутлатăп. Мĕншĕн тесен пушар хăрушсăрлăхĕ никама та айккинче тăратса хăварма пултараймасть. Акă "Передовик" хуçалăхĕн пушар сÿнтермелли ятарлă автомашина пур. Ăна юсаса йĕркене кĕртме пулатех. Ăна тытса тăма каякан тăкаксене «Передовик» хуçалăхпа пĕрле саплаштарăпăр.

Пĕвесем кирлĕ шайра пулни те пушар хăрушсăрлăхĕпех çыхăннă. Вĕсене межевать туса хамăр баланс çине илмелле пулать. Кайран юсав ĕçĕсем туса ирттермеллисем пур. Çак ыйтусемпех депутатсен ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн ларăвне те ирттернĕччĕ. Территорисене тирпей-илем кĕртессипе те сăмах пычĕ унта. Вырăнти депутатсем, старостăсем ĕçлĕ сĕнÿсем пачĕç. Вĕсем пурте пурнăçа кĕртме май пуррисемех.

**– Малашне ялсенчен йăла каяшне полигона турттарассине епле йĕркелесси пирки те пĕлес килет.**

– Ку ĕçе эпир хамăр патра тытăннă та ĕнтĕ. Хĕллехи вăхăтра çÿп-çап нумаях пухăнмасть. Çавăнпа та хальлĕхе ун çине ытлашши пысăк тимлĕх уйăрмарăмăр. Çуркунне ку ĕçе пуçăнма тивет. Вăрттăнлăх мар, çак ĕçсене туса ирттерме малашне ял çыннисенчен укçа пуçтарма тивесси те ытлашши инçе малашлăхра мар.

**– Укçа-тенкĕ пирки сăмах пуçартăмăр пулсан ял тăрăхĕн çитес çулхи бюджечĕ çинче те чарăнса тăратăр пулĕ. Темĕнле ырă ĕç те чи малтан унпа çыхăннă вĕт-ха?**

– Малтанах çавна палăртса хăварнă пулăттăм. Çапла, укçа-тенкĕсĕр май çук. Апла пулин те хăш-пĕр ĕçсене пĕтĕм халăхпа, ниме мелĕпе те туса ирттерме май пур. Ял тăрăхĕн 2011 çулхи бюджетне вара эпир депутатсен Пухăвĕн ларăвĕнче декабрĕн 9-мĕшĕнче йышăнтăмăр. Тупăшсемпе те вăл, тăкаксен енĕпе те 3 миллион та 514,3 пин тенкĕпе танлашать. Çапла, çак суммăна çителĕклĕ теме çук. Укçа пухмалли ытти мелсене те шырама тивет. Культура учрежденийĕсенче массăллă тÿлевлĕ мероприятисем ирттерессине çирĕп йăлана кĕртмелле, вырăнти бюджета пуянлатма май паракан пур шайри налуксем пухăнассине те çирĕп тĕрĕслесе тăмалла, арендa мелĕпе те усă курмалли майсем пур. Ытларах тата, палăртрăм ĕнтĕ, пĕрлехи вăй, ăнланулăх çине шанма тивет. Хамăр пурнăçа лайăхрах тăвасси ытларах хамăртан килет.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**калаçнă.**

# Не потеряй целый год!

Согласно Программе государственного софинансирования пенсии государство удваивает взнос на накопительную часть пенсии. Это мы знаем, но нужно помнить — накопительная часть пенсии увеличивается только в том случае, если взнос составит не менее двух тысяч рублей в год. Таким образом, граждане, вступившие в Программу государственного софинансирования пенсии, могут потерять целый год, если забыли сделать собственный взнос до конца года.

Действительно, граждане, не сделавшие собственный взнос в рамках Программы, а также лица, чей совокупный годовой взнос по состоянию на 31 декабря 2010 года будет меньше двух тысяч рублей, к сожалению, не смогут рассчитывать на государственное софинансирование по итогам 2010 года.

Средства на накопительную часть своей будущей пенсии в рамках Программы государственного софинансирования пенсии можно внести двумя способами: самостоятельно, перечислив деньги в Пенсионный фонд Российской Федерации через кредитную организацию; либо через своего работодателя (для граждан, которые написали заявление в бухгалтерии об удержании добровольных страховых пенсионных взносов из заработной платы). Проверить сумму перечисленных работодателем денежных средств гражданин может в любой момент, он вправе запросить в бухгалтерии расчетный листок.

**Для получения софинансирования пенсионных накоплений за 2010 год необходимо осуществить уплату до 25 декабря 2010 года** (срок 25.12.2010 определен для того, чтобы платеж поступил в ПФР до 31.12.2010).

На сегодняшний день количество участников Программы государственного софинансирования пенсии в России составило почти 3 700 000 человек. В Чувашской Республике в Программу вступило более 77 000 человек.

Программа государственного софинансирования пенсионных накоплений стартовала с 1 января 2009 года. Согласно этой уникальной, не знающей аналогов в мировой пенсионной практике Программы часть взносов на будущую пенсию платит гражданин, а другую часть – государство. При перечислении на личный счет минимум две тысячи рублей в год, гражданин получит еще две тысячи от государства, т.е. государство удвоит деньги участника Программы. При этом максимальный взнос, который софинансируется государством — двенадцать тысяч рублей в год.

Государство будет осуществлять софинансирование пенсионных накоплений в течение десяти лет с момента уплаты участником Программы первого взноса. Участники Программы вправе сами определять и менять размер дополнительных взносов. Для получения права на государственную поддержку формирования пенсионных накоплений, необходимо написать заявление в Пенсионный фонд Российской Федерации. Заявления можно подавать через организацию трансфер-агента, которым является Негосударственный Пенсионный Фонд «Промагрофонд» (организация, с которой Пенсионный фонд Российской Федерации заключил соглашение о взаимном удостоверении подписей).

**Для справки:**

НПФ «Промагрофонд» работает на рынке пенсионных услуг шестнадцать лет, представлен в 104 городах России. Учредители фонда – крупнейшие предприятия промышленности и агропромышленного комплекса.

Фонд «Промагрофонд» является членом «Союза машиностроителей России», Национальной ассоциации пенсионных фондов, партнером пенсионных программ Международной ассоциации участников космической деятельности и Добровольного общества содействия армии, авиации и флоту. Объем пенсионных накоплений НПФ «Промагрофонд» – 4,2 миллиардов руб. Объем пенсионных резервов – 300 миллионов руб.

Страховой резерв сформирован в размере 41,4 млн. руб. Размер имущества для обеспечения уставной деятельности фонда превышает 1,6 млрд. руб. 730 тысяч застрахованных лиц формируют в Фонде накопительную часть пенсии по обязательному пенсионному страхованию. 45,8 тысяч участников формируют в Фонде дополнительную пенсию. Более 9 тысяч граждан РФ получают дополнительную пенсию. Свыше 320 тыс. клиентов Фонда участвуют в Программе государственного софинансирования пенсии.

Фонд обслуживает корпоративные пенсионные программы более 100 предприятий и организаций. Суммарная доходность за 5 лет составила 70,8%, за 2009 год 14,07%.

Среднегодовая доходность Фонда 11,4%. НПФ «Промагрофонд» присвоен статус «Очень высокий уровень надежности» – А+(Эксперт РА).

Специалисты Фонда всегда готовы выехать на предприятия для проведения разъяснительной работы по пенсионному законодательству.

Увеличивайте свою будущую пенсию, участвуйте в Программе государственного софинансирования пенсии!

**Подробную информацию о которых можно найти на сайте www.promagrofond.ru, или обратиться в филиал НПФ «Промагрофонд» в г. Чебоксары по адресу:**

**г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 29, оф. 109, тел. (8352) 62 20 30, 62 17 54.**

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотине тивĕçнĕ

Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыракан 2010 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнчи 842 № йышăнăвĕпе шкул çулне çитмен тата кĕçĕн çулхи ачасен «Калайкассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕ» муниципаллă вĕрентÿ учрежденийĕн поварне **Людмила Ивановна МОЧАЛОВАНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

**Репресси**

# «Манăçмаççĕ çав хăрушă кунсем»

Пĕр йăнăш кăна, пĕчĕк е вăл е пысăк - çыннăн чунне ĕмĕрлĕхех амантса хăварать, ĕмĕр тăршшĕпех чĕрене ыраттарать. Çыннăн сывлăхĕнче те çакă хăйĕн ырă мар йĕрне хăварать. Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-50-мĕш çулĕсенче политика репрессине пула миçе миллион çын хĕн курчĕ, вĕсен мĕн чуль çывăх çыннăн ĕмĕчĕ-пурнăçĕ хуçăлчĕ пулĕ. 1937-1938 çулсенче кăна НКВД органĕсем 1,58 млн. çынна арестленĕ, вĕсенчен 682 пин çынна персе вĕлернĕ. Чăваш Республикинче кăна халăхăн тĕрлĕ сийĕнчи 15 пин пултарулă çын репресси вутне лекнĕ. Вĕсенчен 604-шĕн ячĕ республикăра кăларнă 2 томлă Асăну кĕнекине кĕнĕ.

Политика репрессине пула инкек тÿснисене патшалăх таса ячĕсене таварса панăранпа 20 çул çитет пулин те ун чухнехи самана ахрăмĕ паян та çынсен чунне канăç паманни иртнĕ кĕçнерни кун саккуна пăсса политика репрессине пула инкек тÿснисен Чăваш Республикинчи Ассоциацийĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн отчетпа суйлав конференцийĕнче те яр! усçăнах курăнчĕ. Сăмах май каласан асăннă уйрăм 2007 çулта йĕркеленнĕччĕ. Унта 16-ăн кĕнĕ. Пĕтĕмпе вара паян районта политика репрессине пула инкек тÿснисем 53 çын. Асăннă уйрăмăн председателĕ Н.П. Клементьев çак таранччен тунă ĕçсем çинче чарăннă май çакна палăртрĕ. Çулсеренех районта политика репрессине пула инкек тÿснисен кунĕ умĕн çавра сĕтелсем йĕркелеççĕ. Кăçалтан пуçласа Ассоциацин районти уйрăмĕнче тăракансене юбилей ячĕпе саламласси те ырă йăлана кĕчĕ. Çавăн пекех вĕсене санатори-курорта ярса сывлăхне çирĕплетме майсем туса пăраççĕ. Кăçал кăна унта 3 çын кайса канчĕ, пĕлтĕрпе виçĕм çул – пĕрер çын.

– Патшалăх пире чăннипех те пулăшать. Çитес çулхи январь уйăхĕнчен пире паракан пенси виçи те хăпарать. Анчах çакна эпĕ çителĕксĕр тесе шутлатăп. Паян Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсене патшалăх çурт-йĕр условийĕсене татса пама пулăшать. Ку тĕрĕс япала. Пирĕншĕн çакăн пек пулăшу ытлашши марччĕ. Аслă вăрçăра пирĕн çине нимĕçсем тапăнчĕç, пире вара, репрессин инкекне тÿснисене, хамăр çĕршывăрах хамăр çынсемех нимсĕр тăратса хăварчĕç. Пирĕн атте Омск вăрманĕнчех вилчĕ. Хăйне валли шăтăкне те хăйнех чавтарнă ăна. Аннен ачисемпе ял тăрăх каймалла пулса тухнă. Хуйха пула ир çĕре кĕчĕ. Ытла та хăрушă, шутласан. Çавăнпа та эпир хамăра икĕ пенсине те илме тивĕçлĕ тесе шутлатăп. Тен пыра-киле пулĕ вăл. Патшалăха вара паян паракан пулăшусемшĕн те тав, – терĕ Çатракассинче пурăнакан В.А. Никитина хăйне санаторине янăшăн тав сăмахне каланă май.

Çатракассинче пурăнакан Т.Т. Донсковăн та çав хăрушă çулсем паян та асĕнчех:

– Пире ним çимеллисĕр, тăхăнмаллисĕр, выртса çывăрмалли вырăнсăр тăратса хăварнă. Ку çеç те мар, çурта та туртса илчĕç, – 4 çултах пурнăçăн тертне тÿснĕскерĕн паян та ыратать чĕри. – Эпир пурпĕрех çынна тухрăмăр. Çемьере мантан аслисем çав тери пулăшрĕç пĕр-пĕрне.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн сăмахĕ вара залра ларакан кашни çыннăн чунне пырса тиврĕ:

– Ача чух курман ăшша, ун чух пĕлмен лăпкăлăха сирĕн халь курмалла пултăр. Мĕн кăна тÿссе ирттермерĕр, апла пулин те çынлăха, ырă кăмăла сухатмарăр. Тавах сире çакăншăн, – терĕ Юрий Александрович.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ пыра-киле политика репрессине пула инкек тÿснисене асăнса пуç таймалли вырăн тăвас шухăш пуррине те палăртрĕ. Вăл пуçтарăннисене районăн социаллă пурнăçĕпе тата экономика аталанăвĕпе паллаштарчĕ. Çавăнпа пĕрлех вăхăта сая ямасăр татса памалли ыйтусене те палăртрĕ. Репрессине пула инкек тÿснисене - район пурнăçĕнче активлă пулнисене хăйĕн ятĕнчен Тав çырăвĕсем пачĕ.

Конференцинче çавăн пекех Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хÿтлĕх пайĕн ертÿçи Н.П. Петрова, «Рассейри пенсионерсен союзĕн» Чăваш Республикинчи уйрăмĕн пирĕн районти уполномоченнăйĕ В.С. Краснов тухса калаçрĕç. Конференцинче тухса калаçакансен сĕнĕвĕсемпе репрессие пула инкек тÿснисен Чăваш Ассоциацине тухма йышăнса хăварчĕç.

Çавăн пекех конференцие асăннă Ассоциацин пирĕн районти уйрăмĕн правленине, председательне суйларĕç. Пуçтарăннисем председательне Николай Петровичах хăварчĕç. Н.П. Клементьевпа А.Ф. Федорова политика репрессине пула инкек тÿснисен Чăваш Ассоциацийĕн 3-мĕш съездне кайма делегата суйларĕç. Юлашкинчен Муркашри Культура çуртĕ çумĕнчи «Илем» ансамбль илемлĕ юрăсемпе савăнтарчĕ.

**Л.ПАВЛОВА.**

# Гранта кам тивĕçет?

**Патшалăх пулăшать**

***Малашлăха пăхса, çĕннине алла илсе ĕçлес шухăшлисем валли патшалăх тĕллевлĕ пулăшу уйăрать. Çавна май Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн постановленийĕпе килĕшÿллĕн хăйсен ĕçне тытăнма хатĕрленекен пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсен ятарлă бизнес-план хатĕрлемелле. Çак йĕркепе тĕплĕнрех паллашас тĕллевпе эпĕ район администрацийĕн экономика пайĕн ертÿçипе Э.И. СИМАКОВĂПА калаçрăм.***

**– Эльвира Иосифовна, патшалăхăн ку тĕлĕшри пулăшăвне кам тата мĕнле тĕллевпе тивĕçме пултарать.**

– Патшалăхăн ку пулăшăвне хăйсен ĕçне тытăнма хатĕрленекен пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсем тивĕçме пултараççĕ. Вĕсем валли патшалăх ятарлă грант уйăрать. Çак ĕç 2006 çултанпа пырать. Ку енĕпе вара çулсеренех ятарлă конкурс ирттеретпĕр. Раççей Федерацийĕн саккунĕпе килĕшÿллĕн гранта тивĕçес тесен вара чи малтан налук органĕнче регистрациленмелле. Анчах та регистрациленнĕ тапхăр пулăшăва тивĕçес вăхăт тĕлне пĕр çулталăкран иртмелле мар.

**– Конкурса хутшăнма мĕнле документсем хатĕрлемелле-ха?**

– Чи малтанах хăйсен ĕçне тытăнма хатĕрленекенсен вăл е ку енĕпе тупăш илме пултараканăн пĕр-пĕр çĕнĕлĕх тупмалла. Эсир пуçăнас ĕç сирĕншĕн те, районшăн та пĕлтерĕшлĕ пулмалла. Сирĕн ĕç валли мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ кайма пултарнине шутламалла, бизнес-план хатĕрлемелле. Тĕрĕс хатĕрленĕ бизнес-плана Чăваш Республикин Экономикăпа суту-илÿ министерствинчи конкурс комиссийĕ пăхса тухать. Хăш чухне вара ку ĕçе районти ĕçлĕ комиссие те шанаççĕ. Комиссире пăхса тухма пĕр бизнес-план кăна хатĕрлеме юрать. Документсем çителĕксĕр пулсан комисси бизнес-плана пăхса тухмасть, ун пирки çичĕ кун хушшинче çырса пĕлтереççĕ. Тĕрĕс те тулли бизнес-плансене 15 кун хушшинче пăхса тухаççĕ. Бизнес-плансене баллсемпе хаклаççĕ, 4-5 балл пухнисем патшалăх пулăшăвне тивĕçеççĕ. Çитес çул çакăн йышши бизнес-плансене февраль уйăхĕнче пăхса тухма палăртнă.

**– Ĕçе пуçăнма тивĕçнĕ бизнес-плана вăя кĕртме патшалăх мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрать-ха?**

– Ку тĕлĕшпе уйăракан грант калăпăшĕ 300 пинтен пысăк пулаймасть. Анчах та бизнес-планра пăхса хунă вунă процент чухлĕ ĕçе пурнăçланине (мĕн чухлĕ тăкакланнине) çирĕплетекен документ кирлĕ.

**– Çак укçа-тенкĕне хăш шайри бюджетсенчен уйăраççĕ?**

– Бизнес-плана ăнăçлă хÿтĕленисене федераллă тата республика шайĕнчен саплаштараççĕ.

**– Çапах та хăйсен ĕçне тытăнма хатĕрленекен пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсем тĕрлĕ шайра пулма пултараççĕ: налук парăмĕ пысăк, панкрута тухас тапхăр е тата ытти кăлтăксем.**

– Кун пек чухне вĕсене конкурса хутшăнтармаççĕ.

**– Эльвира Иосифовна, тен гранта тивĕçнисен хăш-пĕр ячĕсене асăнса хăваратăр?**

– Паллах патшалăх пулăшăвне тивĕçес текенсен кашнин хăйĕн тĕллевĕ, пуçарулăхĕ тата пултарулăхĕ. Акă кăçал хур-кăвакал ÿстерес ĕçе аталантарас тĕлĕшпе С.В.Григорьев 4,7 балл пухма пултарчĕ, ăратлă сурăх ĕрчетес ĕçе пуçарма А.М.Константинов 4,5 балл пухрĕ. Çавăн пекех А.Г.Яковлев тата А.В.Федорова хăйсен ĕçĕсене аталантарма патшалăх пулăшăвне тивĕçме пултарчĕç. Вĕсем бизнес-плансене ăнăçлă хÿтĕлесе 50-250 пин тенкĕ грантсене тивĕçрĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

# Кунта 13 ĕмĕртех тимĕр шăратнă

**Тĕлĕнтермĕш – юнашарах**

Иртнĕ çу кунĕсенче Шашкар çывăхĕнче Чăваш наци музейĕн археологи экспедицийĕ ĕçлерĕ. Тĕлĕнтермĕш – Атăл çыранĕнче тимĕр шăратнă вучах чавса кăларнă. Кĕркуннепе кунта тата ултă кăмака тупнă. Вĕсем пурте пĕр ретре, пĕр-пĕринчен 2,5 метрта вырнаçнă. Кăмакасен диаметрĕ – 3,5 метр, тарăнăшĕ – 3,2 метр.

Кăмака конструкцийĕ хăйне евĕр. Ăна çĕр ăшне чавса тунă. Кăмакана çурçĕр еннелле пăхтарнă. Мĕншĕн тесен кунта çурçĕр енчен çил тăтăш вĕрет. Вăл вара 1300 градус тытса тăма пулăшнă. Çил лайăх вĕрнĕ чухне кăмака 2-3 кун ĕçленĕ. Кăмакана тимĕр тăприпе кăмрăка сийĕн-сийĕн хурса тухнă. Çиелтен йывăçпа витнĕ. Хыççăн вучах чĕртнĕ. Кăмрăкĕ çуннă çемĕн тимĕр тăпри ирĕлнĕ. Кăмрăк çунчăкĕ ятарлă шăтăкран юхса тухнă. Тимĕрĕ вучах айĕнче пухăнса пынă. Кăмака 2-3 кун ĕçленĕ хыççăн çавăн чухлех сивĕннĕ. Вăл вăхăтра ун тăррине пăснă. Тимĕрне ĕç хатĕрĕ е хĕç-пăшал тума тимĕрçĕ лаççине ăсатнă.

Ученăйсем Атăл тăрăхĕнче тимĕр шăратмалли комплекс урăх тупманнине палăртаççĕ.

Тепĕр тĕлĕнтермĕш – кунтах 14 ĕмĕрти тимĕр укçа та тупнă. Тутар ученăйĕсем каланă тăрăх унпа хулагуид патшалăхĕнче усă курнă. Вăл 13-14 ĕмĕрте тутар-монгол империйĕ салансан йĕркеленнĕ. Вăл паянхи Иран, Ирак, Азербайджан, Афганистан, Туркменистан территорийĕсене йышăннă. Патшалăх Каспи тинĕсне тухнă. Çапла тимĕр укçа Атăл тăрăх хăпарма пултарнă.

Экспедици ертÿçи Дмитрий Спрыжков çитес çу кунĕсенче тĕпчев ĕçĕсене малалла тăсасшăн. Эппин пире çĕнĕ тĕлĕнтермĕшсем кĕтеççĕ.

**А. ИВАНОВ.**

# Яла – парăм пуçтарма

**Рейд**

***Рекламăри «налук тÿле те лăпкă çывăр» тени пурнăçра чăн килет. Çакна налук службин сотрудникĕсемпе суд приставĕсем тăтăш йĕркелекен рейдсем те çирĕплетсе параççĕ. Акă иртнĕ кунсенче вĕсем транспорт, çĕр налукĕ, уйрăм çынсен пурлăх çине хуракан тата тупăшран илекен налука тÿлессине парăмсем пуррисем патне çитсе килчĕç.***

